Сениэль М. Вилĕмсĕр "Нарспи" çунатлантарчĕ ; Нарспи : [сăвăсем] / М. Сениэль // Коммунизм ялавĕ. - 1990. - 25 çу.

Вилĕмсĕр «Нарспи» çунатлантарчĕ

* * *

Эп калатăп çаплалла,
Аслă çын пулма,
пысăк шухăш тытмалла
пĕлмелле нумай.

* * *

«Поэт» тенĕ сăмах
манра çуралчĕ.
Çунатăп, çунатăп
çавăнпах,
Вилĕмсĕр«Нарспи»
çунатлантарчĕ.
Шухăшпа вĕçсе эп кайрăм
çунатпах…

1951—1952

Нарспи

Йывăçран пуян-çке
Аксу пахчисем, -
Çулçă, ав, çураççĕ шкупăн сачĕсем.

Пĕр çĕрте, садра ман
савнă вырăн пур,
Мĕншĕн вăл тĕле пит
эп юратрăм пуль?
Шăплăха-ши саврăм
е кичемлĕхе?
Çук, унта иленчĕ
пĕр çап-çамрăк хĕр.

Шăпчăк пек юрлать вăл
çурхи каçсенче
ман тĕлтех, асамлă
уйăх çутинче.
Пытанса итпетĕп
хĕр çывăхра чух.
Патнерех пымашкăн чĕптĕм халăм çук.

1957, май.